# Паллă чĕлхеçĕ, ăста куçаруçă

Никита Яковлевич Бичурин 1777 çулта хальхи Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуç ялĕнче Яков Данилов дьякон çемйинче çуралнă. Вăл ачаранах тантăшĕсемпе пĕрле чăвашла калаçса çитĕннĕ, тăван тавралăхри тĕрлĕ йăла-йĕркене, ăна пĕлсе пурнăçлама тăрăшнă.

1786 çулта Никитăна вĕренме яраççĕ. Малтан вăл Сĕве хулинчи музыка шкулĕнче, кайран Хусанти семинарире вĕренет. Кун хыççăн, 1797 çулта, Хусан академийĕнче пĕлӳ илет. Унтан вĕренсе тухсан, çавăнтах информатори учителĕ пулса ĕçлеме юлать. 1800 çулта вăл грамматика класне вĕрентет. Çав вăхăтра юлташĕсемпе пĕрле манаха тухать. 1794 çулта архимандрит ятне илет, ун хыççăн ăна академи ректорне лартаççĕ. Вăл епископ пулса халăха хут вĕрентес ĕçе тытăнать, 1802 çулта

Иркутск хулипе çул тытать, унта семинари ректорне ларсассăн вырăнта çирĕп йĕрке тума пуçăнать, халăха вĕрентес енĕпе кивĕ йĕркесене пĕтерсе çĕнĕ система туса хурать. Анчах та духовенствăра ĕçлекенсенчен хăшпĕр çынсем, ӳсĕм çулне хирĕç тăрса, ăна хăйĕн пӳлĕмĕнче хĕр усрать тесе элек сарса Тобольск тĕрмине яраççĕ. Анчах та хăйĕн юлташĕ тĕрмерен хăтарнă.

1807—1821 çулсенче Китайра Пекин хулинче пурăнать. Кунта Н. Я. Бичурин Китай чĕлхине вĕренсе çитет, татах та тăшмансем пуласса сиссе, Петербурга çул тытать. Унта çитсен унăн ĕçĕнче палăрмалли вăхăт пулса тăрать. Кунта Бестужев декабристпа, вырăссен паллă поэчĕпе А. Пушкинпа, И. А. Крылов, В. Ф. Одоевский, М. П. Погодин тата ытти паллă çынсемпе çыхăну тытнă, хăйĕн ĕçĕсемпе паллаштарнă. Çавăн пекех Ази халăхĕсен культури Европа халăхĕсенчен нимĕнпе те кайра маррине ĕнентермелле кăтартса панă.

Н. Я. Бичурин чăвашла тата вырăсла пĕлнĕ. Унсăр пуçне Китайла, монголла, французла, грекла, латинла аван пĕлнĕ. Петербургри соборта сайра тĕл пулакан экспонатсемпе паллашнă.

Н. Я. Бичуринăн çырас пултарулăхĕ малтан поэзире палăрнă. 1795 çулта хăйĕн вĕрентекенне епископа халаллаunion вырăсла «Сон», авалхи грекла «песнь», «ода», çавăн пекех чăвашла мухтав сăвви çырнă. Çакăнта Бичуринăн поэзири пултарулăхĕ, вăл тĕрлĕ чĕлхене аван пĕлни палăрать. Кунсăр пуçне унăн çулçӳревсем çинчен çырнă очеркĕсем Мускаври, Петербургри журналсенче пичетленсе тухнă.

Н. Я. Бичуринăн юлташĕ Виктор Петрович Вишневский пулнă. Вăл (1778—1822) священник килйышĕнче çуралнă. Хусанта тĕн семинарийĕнче Н. Бичуринпа пĕр вăхăтра вĕреннĕ. 1828 çулта Мускаври Славян академийĕнчен вĕренсе тухсан, Хусан семинарийĕн профессорĕ пулса тăрать. Çак вăхăтра вăл чăвашла вĕренекенсем валли пособи хатĕрлет —«Словарь чувашского языка», «О чувашском языке», «Начертание правил чувашского языка» (грамматика) тата ытти пособисем те пичетлесе кăларать.

В. П. Вишневский Н. Я. Бичуринпа яланах çыхăну тытнă, пĕр-пĕрин патне çырнă çырусем архивсенче упранаççĕ. Н. Бичурин кĕнекисене вырăсларан чăвашла куçаракан Ермей Рожанский пулнă. Вăл Кăрмăшра священник килйышĕнче çуралнă. Чăваш литература чĕлхине аталанма чылай пулăшнă. Тĕслĕхрен, «Краткий катехизис» турă кĕнекине, тури чăвашсен калаçу чĕлхине тĕпе хурса, ăста куçарнă. 1800 çулта Е. Рожанский куçарнă катехизис кĕнеке Петербургра уйрăм кĕнекен çапăнса тухнă. Çакă вăл чăваш çырулăхĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланнипе пĕлтернĕ. Унăн ĕçне кайран светуйсем Кирилпа Мефодий, Н. Золотницкипе И. Яковлев малалла çĕнетсе пынă.

«Краткий катехизис» кĕнеки, ăна чăвашла куçарни, Кирилпа Мефодий (1903), «Солдалык кнеги» (Хозанди 1874 ç.), «Рассказы из русской истории на чувашском языке (Симбирск, 1888) пирĕн халăх музейĕнче упранаççĕ.

Кунсăр пуçне музей фондĕнче Н. Я. Бичурин çырнă «Собрание сведений по исторической географии Восточной и Средней Азии». «Ради вечной памяти», Китай çипуçĕпе ӳкернĕ портрет та курма пулать. Çакă паллă: 1849 çулта Н. Бичурин хăйĕн библиотекинчи темиçе томлă кĕнекисене Хусанти академине парнеленĕ.

Юлашкинчен çакна каласшăн: Н. Я. Бичурин пĕлӳ енчен нумай енлĕ, вунă чĕлхе пĕлекен çын пулнă. Китай, Вăтам Ази çĕршывĕсен историпе культурине тĕпчесе, вăл тĕнчипе паллă çын пулса юлнă. Унăн ĕçне хакласа, 1828 çулта Раççей ăсталăхĕсен академийĕн член-корреспонденчĕ. Парижри Азиат обществин действительнăй членĕ, Наука академийĕн Демидов премийĕн лауреачĕ ятпе панă.

Шупашкар хулинче Бичурин çуралнăранпа 220 çул çитнĕ ятпа палăк лартаççĕ.

Н. Я. Бичурин 1853 çулта вилнĕ, ăна Петербургри Александр Невский çăвинче пытарнă.

**К. ВОРОНОВ,**
**Чăваш Сурăмĕнчи халăх музейĕн директорĕ, Раççей Федерацийĕн культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**